ИЛЬЯ ТУКТАШ

ХЁВЕЛ

ЧӐВАШГОСИЗДАТ
Шупашкар • 1947

ИЛЬЯ ТУКТАШ

Хӗвел

САВӐСЕМПЕ ЮРӐСЕМ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗ. Пис.
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
31 августа 1948 г.
№ 89

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1947

УМСĂМАХ

Çак кĕнекери сăвăсене Илья Тукташ юлашки 5—6 çул хушшинче çырнă. Поэт кунта халăх пурнăçĕнчи нумай тĕрлĕ темăсене хускатать, анчах унăн мĕнпур сăввисене пĕр туйăм, пĕр шухăш пĕтĕçтерсе тăрать.

Çурхи тĕнче вăраннă чух,
Хаваслă кун шăраннă чух,
Чун савăнать, чĕре сикет,
Çĕршыв çинчен юрлас килет,—

тесе юрлать вăл „Тăван Çĕршыв" юрăра.

Тукташ хамăрăн юратнă Тăван Çĕршывăмăрпа унăн ирĕклĕ çыннисем çинчен, пире çĕнтерӳпе телей патне илсе пыракан аслă çулпуçăмăр Сталин çинчен, халăх ывăл-хĕрĕсен паттăр ĕçĕсемпе вĕсен хуйхи-суйхи çинчен çырать, тĕрĕсрех каласан, юрлать.

Тукташ—лирик-юрăçă. Чĕлхи унăн—çепĕç музыкăллă чĕлхе. Çакăнпа ĕнтĕ вăл ытти мĕнпур чăваш поэчĕсенчен палăрмаллах уйăрăлса тăрать. Унăн поэзине халăх пултарулăхĕн çăлкуçĕ чĕрĕ сĕткен парса тăрать. Вăл çапла пулмалла та, мĕншĕн тесен чăн-чăн поэзи, улмуççи аслă çĕртен сĕткен илсе çитĕннĕ пекех, халăх пултарулăхĕнчен вăй илсе чечеклĕнет, урăхла пулсан—типсе хăрса ларать.

Илья Семенович Тукташ литературăра çирĕм çул ытла ĕçлерĕ ĕнтĕ. Кунта эпир поэтăн мĕнпур ĕçĕсене пăхса тухаймăпăр. Ку кĕнекене пухнă сăвăсем те поэт çирĕм çул хушшинче мĕн чухлĕ çырнине мар, вăл мĕнле пусăма ӳссе çитнине çеç кăтартса параççĕ. Поэт халĕ йышăнса тăракан пусăм вăл—шухăшпа илем тĕлĕшĕнчен чăннипех те пысăк пусăм.

Тукташ—çитĕнсе çитнĕ поэт. Вăл тивĕçлĕ шухăша тивĕçлĕ формăпа калăплама, нумай тĕрлĕ кĕвĕ-çемĕсемпе ăстан усă курма пĕлет. Çавăнпа унăн сăвви-юррисем çăмăллăн вуланаççĕ, юрланаççĕ, ăспа чĕрене ăшшăн та нумайлăхах кĕрсе вырнаçаççĕ. Вĕсем—пуçра çутă шухăш, чĕрере таса туйăм' вăратаççĕ.

Пирĕн сăмах çакă кăна, ыттине вулакан хăй калĕ

Аркадий Эсхель.

ХĔВЕЛ

Çурхи хĕвел çуттăн курăнать,
Пĕтĕм çут тĕнчене ăшăтать.
Çурхи хĕвелрен те хĕлхемлĕрех
Сталин атте пире ăшăтать.

Ĕнтĕ мĕнсем нумай, мĕнсем нумай?
Хĕвел çинче çиçен мерчен нумай.
Аслă Сталин атте сывă чухне
Кашнин чĕрийĕнчех телей нумай.

Колхоз пахчи çине кăрпăк çумĕ,
Чечек çеçке çурни кăлăх пулмĕ.
Хамăр Сталин атте сывă чухне
Тĕнче çути курни кăлăх пулмĕ.

Чĕкеçĕсем карлăк, ай, тăрринче,
Вĕçевĕсем пĕлĕт хушшинче.
Сталин атте куçăм, ай, умĕнче,
Сăмахĕсем чĕре çумĕнче.

ТЕЛЕЙ УТРАВĔ

Эп чуллă сăрт хысакĕнче тăраттăм,
Тĕтреллĕ тинĕсĕн тӳремлĕхĕ çине пăхса.
Шавлатчĕ çеç татти-сыпписĕр тинĕс,
Хаяр çилтăвăлпа асар-писер урса,
Хĕвеллĕ кун çути тăвăл амакĕнче сӳнетчĕ.

Пĕр шавлă тинĕс варринче кăна,
Таçта-таçта лере, сĕм-инçетре
Çап-çут çиçсе тăратчĕ ман умра
Телейпеле çут савăнăç утравĕ.

Çав чуллă сăрт хысакĕнче тăракансем
Пурте ман пек тĕрексĕр, мĕскĕн этемсемччĕ.
Пайтах-пайтах телей утрав çине пăхса
Вĕсем хĕвеллĕ çĕршыва куçма пикеннĕ,
Анчах хаяр сив тинĕс авăрĕ, çилпе
Çĕкленейсе, пурне те ахрата путарнă,
Телей шыран этемсене асап сунса,
Чунсем туххичченех чĕр тамăкра çунтарнă.

Телейлĕ эп! Ман тĕлĕшрен
Пĕр харсăр, паттăр капитан тĕл пулчĕ.
Мана вăл хăй кимми çине лартса,
Тамăкри пек вĕрен хумсем урлах
Çав савăнăç утрав çине илсе çитерчĕ.
Телейлĕ эп!

ÇУЛПУÇ

Çил-çунатлă ĕмĕтпе
Кунçула йĕрлерĕмĕр...
Çилĕ вĕрчĕ çивĕччĕн,
Кунĕ иртрĕ тĕксĕмĕн.
Кӳтсе çитнĕ чĕрене
Пусарма пĕлмерĕмĕр,—
Пархатарсăр пурнăçран
Ăраскал та писнĕ мĕн...
Ах эс, ырă ĕмĕтĕм,
Тертлĕ халăх ĕмĕчĕ!
Ма хуплана-ши сана
Сăнсăр çумăр пĕлĕчĕ?

* * *

Хĕвелтен те çутăрах
Телее шырарăмăр.
Хурлă пулчĕ кунăмăр,
Тертлĕ пулчĕ çулăмăр.
Тăванпа та тантăшпа
Курнăçма хăрарăмăр,—

Пурте чун тухмасăрах
Чĕр тамăкра çунтăмăр.
Эх, хăçан-ши, тăвансем,
Кăвак хуппи уçăлĕ,
Сĕмсĕр пĕлĕт тӳпинче
Шурăмпуçĕ çутăлĕ?

* * *

Çут хĕвелĕн шевлинчен
Хурçă хĕç шăратрăмăр,
Çитмĕл çичĕ чĕлхепе
Çак юрра янратрăмăр:
—„Улăпран та вăйлăрах
Паттăр çын çуралтăрччĕ,
Çутă чăнлăх çулĕпе
Пире ертсе кайтăрччĕ!
Çилĕ тулнă кăкăра
Ярнех уçасчĕ те
Вутлă çиçĕм чулĕпе
Чĕрене хăйрасчĕ тек!“

* * *

Çăлтăр çиçрĕ тӳпере—
Шурăмпуçăн çăлтăрĕ,
Сивĕ каçăн сĕмлĕхне
Çурса ячĕ çурмаран.
Эпĕр утрăмăр вара

Тăвăл хыпнă çул тăрăх
Паттăр Улăп чĕннипе
Чăмăртаннă çарпалан.
Вут чĕреллĕ Сталинпа
Алла-аллăн утрăмăр,
Ĕмĕр кĕтнĕ телее
Унпалан çеç тупрăмăр.

* * *

Анлă Атăл сарлака,
Хумĕсем те шухă мĕн,
Умлăн-хыçлăн палкаса
Ыткăнаççĕ тинĕсе.
Атăлран та шухăрах
Чаплă ĕмĕр юхăмĕ,—
Сывлăм сапрĕ Çĕршыва
Çут тумламăн сирпĕнсе.
Ой эс, çутă пурнăçăм,
Пархатарлă ĕмĕрĕм,
Тавтапуç сана, Çĕршыв,
Тавтапуç, аннемĕрĕм!

* * *

Хĕвелрен те çутăрах
Çулпала утатпăр халь,
Асла Сталин аттене
Тав тăватпăр кунçерен.

Унăн вилĕмсĕр ятне
Юрăра мухтатпăр халь,
Вăл çутатнă пархатар
Ĕмĕр сӳнмĕ чĕрере!
Пурăн эс, çулпуçăмăр,
Çиç эс, çут хĕвелĕмĕр,
Сан ятупа çак юрра
Эпĕр кĕвĕлерĕмĕр...

СТАЛИН

Хĕвеле тыткăнран кам хăтарчĕ,
Ĕмĕрхи тамăка çĕнтерсе?
Кам-ши вăл ĕмĕте сыпăнтарчĕ
Иксĕлми телейпе çĕнетсе?

—Сталин!

Пурнăçа ирĕке кам кăларчĕ,
Кам сыватрĕ этемĕн чунне?
Кам-ши вăл иксĕлми пурнăç пачĕ
Аслă халăхăн ывăл-хĕрне?

—Сталин!

Çĕршыва мухтава кам кăларчĕ,
Кам сиплерĕ ун чаплă ятне?
Кам-ши вăл вилĕме парăнтарчĕ,
Çĕклесе çĕнтерӳ хăватне?

—Сталин!

Кам çитес ăрусемшĕн çул уçрĕ
Чи телейлĕ, хĕвеллĕ куна?

Кам-ши вăл, янкăр тăрă çалкуç пек
Тасатса, çутатайрĕ чуна?

—Сталин!

Камăн ячĕ сӳнми хĕвелтен те
Çутăрах йалкăшать-ши паян?
Кам-ши вăл ылттанпа кĕмĕлтен те
Хаклăрах кашни çыншăн ялан?

—Сталин!

ПОЛКОВОДЕЦ СТАЛИН

Çиçĕм çиçрĕ, тăвăл тухрĕ,
Аслати кисренчĕ.
Сăхă нимĕç шайкă пухрĕ,—
Вăрçăпа çĕкленчĕ.
Ман тăван Çĕршыв хускалчĕ,
Çирĕп ун вăй-халĕ.
Çĕнтермешкĕн шанчăк пачĕ
Полководец Сталин.

Пире парти хурçăлатрĕ
Пурнăçа кĕмешкĕн,
Пире Сталин çул кăтартрĕ
Вилĕме çĕнмешкĕн.
Ирĕк халăх чура мар тек,
Çирĕп ун вăй-халĕ.
Сывă пултăр аслă парти,
Полководец Сталин!

Кар тăрса, пĕр çын пек эпĕр,
Вутлă çумăр витĕр,

Тăшмана шав çĕмĕретпĕр,—
Вилĕмĕ ун çитрĕ.
Паттăр çарăн чаплă ячĕ
Иксĕлми çуталĕ.
Ăна хурçа хăват пачĕ
Полководец Сталин!

Ян-янрать тăван Мускавăн
Юрă пек йыхравĕ.
Аслă халăхсен мухтавĕ—
Парăнми йăхра вăл.
Пирĕн юрă—хурçă маршлă
Çĕнтерӳ ялавĕ.
Сывă пултăр чаплă маршал—
Полководец Сталин!

ÇĔР-ПАТТĂР

Улăп пек çĕкленет ман мухтавлă Çĕршывăм!
Çĕнтерӳ чапĕпе йăлкăшать Аслă Кун.
Эй, аннемĕр—Çĕршыв! Вăйхăватлăн та сыввăн
Алла-алăн утать сан патвар халăху.

Тĕнчене çутатса хĕлхемленчĕ Октябрь,
Тăшмана тустарса вутлă тăвăлпалан.
Ĕмĕртен-ĕмĕре вырăс халăхĕн чапĕ
Хĕвел пек йăлкăшса çиçсе тăрĕ ялан.

Вилĕме çĕнтерсе чапа тухнă Çĕр-Паттăр
Этемсен телейне хураллать вĕçĕмрен.
Ун ятне мухтаса халь эпир янрататпăр
Пархатар кăмăлпа чи таса чĕререн:
—Аслă Çĕр-Паттăра
Ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Кĕреке юрри

* * *

Çурхи тĕнче вăраннă чух,
Хаваслă кун шăраннă чух,
Чун савăнать, чĕре сикет,
Çĕршыв çинчен юрлас килет.
—Тăван Çĕршыв! Тăван Çĕршыв,
Асран кайми юратнă Çĕршыв!

* * *

Тăван уй-хир тумланнă чух,
Колхоз тырри хумханнă чух,
Чун савăнать, чĕре сикет,
Тата еван ĕçлес килет.
—Тăван Çĕршыв, Тăван Çĕршыв,
Никам çĕнми мухтавлă Çĕршыв!

* * *

Тăвансемпе пĕрлешнĕ чух,
Тулли креке кĕрленĕ чух,

Чун савӑнать, чӗре сикет,
Пӗрле ӗҫсе-ҫиес килет.
—Тӑван Ҫӗршыв, Тӑван Ҫӗршыв,
Асран кайми юратнӑ Ҫӗршыв!

* * *

Хитре хӗрсем юрланӑ чух,
Питре телей выляна чух,
Чун савӑнать, чӗре сикет,
Нихҫан ватӑла пӗлес килмест.
—Тӑван Ҫӗршыв, Тӑван Ҫӗршыв,
Телей уҫҫи—юратнӑ Ҫӗршыв.

* * *

Маттур яшсем ташланӑ чух,
Сӳнми вӑй-хал ҫӗкленнӗ чух,
Чун савӑнать, чӗре сикет,
Тата маттур пулас килет.
—Тӑван Ҫӗршыв, Тӑван Ҫӗршыв,
Мухтав сана, юратнӑ Ҫӗршыв!

* * *

Ват стариксем юрланӑ чух,
Тулли черкке янранӑ чух,
Чун савӑнать, чӗре сикет,
Татах та нумай пурнас килет.
—Тӑван Ҫӗршыв, Тӑван Ҫӗршыв,
Тавах сана, мухтавлӑ Ҫӗршыв!

* * *

Тăван Çĕршыв мухтавĕпе,
Юратнă Сталин чапĕпе,
Ай ĕçер-и, ай çиер-и,
Виличчен пĕрле ай пурнар-и...
—Тăван Çĕршыв, тăван Çĕршыв,
Никам çĕнми хăватлă Çĕршыв!

МУСКАВ

1

Пурнăçра телей халаланă пек
Йăлкăшса тăран эс, Мускавăмăр!
Ĕмĕрсен чаппе хавхаланнă пек
Çĕкленет санпа вăй-хăватăмăр.

Сан çире çап-çут Кремль çăлтăрĕ
Хĕлхемне сапать, хĕвелпе пĕрех.
Ленин генийĕ уçнă çул тăрăх
Тӳп-тӳрех утма йыхравлать пире.

Ой, Мускавăмăр, чыс-мухтавăмăр!
Сан çирен эпир юрă хыврăмăр.
Йывăр кун çитсен, хĕç туптарăмăр,—
Паттăр пул ялав эс, Çĕршывăмăр.

2

Пĕрре мар иккен çичĕ ют çынни
Иксĕлми чапна санне хапсăннă.
Пĕрре мар хăруш вăрçăпа тухса,
Вăрхурах этем сана тапăннă.

Суранланнă çĕр, хаярланнă чун,
Вутлă хĕç тытса кар çĕкленнĕ Русь.
Çеçкесем çинче кăварланнă юн,
Чаплă кун курма ÿснĕ çĕн ăру.

Ой, Мускавăмăр, чыс-мухтавăмăр,
Эс çĕршыв чĕри, хуласен хули!
Нихăçан сана юта памăпăр,—
Ĕмĕрне ан пул тăшмансен кулли!

3

Кĕрлесе тăран аслати иртсен,
Сар хĕвел шевли тĕтрене сирет.
Тасалать чĕре. Ялтăраç питсем,—
Кремльрен Çулпуç саламлать пире.

Ой, Мускавăмăр, чыс-мухтавăмăр,
Тăвăла-çиле парăнмарăн эс!
Тăшмана чăл-пар çеç тустартăмăр,
Иксĕлми чаппа мухтанан халь эс.

Ой, Мускавăмăр, пирĕн чапăмăр,
Сан патвар чĕрÿ—паттăрсен чĕри.
Пархатарлăн халь юрра ятăмăр,
Ирĕк кун шевли хумхансан вĕрин.

4

Ĕçлĕ кун иртет, канăç kaç килет,
Ыранхи куна хапăллать тĕнче.

Ăпланать çĕршыв. Пĕр этем кăна
Тĕлĕрмест иккен, куç хупмасть ирччен.

Ĕмĕрсем урлах тинкерсе пăхса
Хуралта тăрать ывăнми салтак.
Вăл курать, пĕлет: сĕмсĕр каç иртсен
Ăшшăн ялкашĕ çутă кун татах.

Ой, Мускавăмăр, чыс-мухтавăмăр!
Сан чапна сыхлать пурнăç улăпĕ.
Кашниех паян сăмах патăмăр
Чĕрепе пулма çиçĕм чулĕ пек.

5

Мавзолей çинче вăл тăрать ялан,
Саламлать пире ăшă кăмăллăн,
Нихăçан сӳнми аслă чăппала
Мухтава кĕме сывлăх суннă пек.

Куçĕпе пăхсан, кам-ши халь ăна
Чĕрине пама хатĕр пулмĕ-ши?
Тав тăвать тĕнче Аслă Сталина
Вилĕме çĕнме вăйхал кӳнĕшĕн!

Ой, çулпуçăмăр, çывăх тусăмăр!
Сан çинчен эпир юрă хыврăмăр.
Санпала пĕрле—харăс, пурсăмăр—
Виличчен пулма тупа турăмăр.

Тĕттĕм сирĕлчĕ. Тул та çутăлчĕ.
Пĕлетре çиçет миллион хĕвел.
Çĕкленсем, чĕрем! Чунăм, уçăлччĕ,
Çĕн куна кĕме тасалса çĕнел!

Тăвăл иртрĕ халь; иртрĕ тертĕмĕр.
Шевле-пек çиçет ак Мускавăмăр.
Ăрусем-йăхсем! Ĕмĕрсем иртсен
Паянхи чаппа эсир савăнăр!

Ой, эс, пурăнăç, аслă пурăнăç!
Ĕмĕрсен чапне манăçа ан хыв.
Юмахри тĕнче майлăн курăнĕ
Ватăлми Мускав, парăнми Çĕршыв.

ÇĔНТЕРŸ ЮРРИ

Сар хĕвел çине пăхса савăнăр!
Çĕнтерӳ юрри шăранать ян-ян.
Ĕмĕрне сӳнми чап мухтавăмăр
Çутатса тăрать тĕнчене паян.

Çут тĕнче çине пăхса савăнăр!
Ĕшерсе выртать ирĕкри Çĕршыв.
Тăшмана нихçан пурнăç памăпăр,
Тек ан пултăр ун шăршипе марши.

Паттăрсем çине пăхса савăнăр!
Мăн Уяв кунне саламлаç вĕçем.
Чĕресем тулли пирĕн тавăмăр,
Чыс-салам сире, çĕнтерӳçĕсем.

Сар хĕрсем çине пăхса савăнăр!
Питсенче çиçет кĕтнĕ савăк кун.
Хуйхă иртрĕ халь, тунсăхламăпăр,
Вĕресе тăрать пирĕн çамрăк юн.

Черккесем çĕклер Аслă Сталиншăн,
Çулпуçне паян мухтаса юрлар.

Вилӗме ҫӗнме хӑват панӑшӑн
Чӗререн ӑна тавтуса пурнар.

Тавтапуҫ сана, ыр Ҫӗршывӑмӑр!
Эс нихҫан пулман ҫичӗ ют кулли.
Сан ҫинчен эпир юрӑ хыврӑмӑр,
Ӗмӗрне сӳнми ҫӗнтерӳ юрри.

КӖТНӖ ХӐНА ЮРРИ

1.

Хавас кӑмӑлпа хумханать ман чӗре,
Паян сирӗнпе курнӑҫап крекере;
Ҫурхи хӗвелпе шӑранать аслӑ кун,
Сӳнми телейпе ҫӗкленет шухӑ чун.

Тулли черкке, ҫап-ҫут черкке,
Янра алра!
Тӑван Ҫӗршыв хӗвелӗшӗн
Савнар, юрлар.
Ай-яй-яй-яй—ай,
Ай-яй-яй-яй—ай,
Пурнан кунҫул телейӗшӗн
Савнар!
Мухтав сана, Тӑван Ҫӗршыв,
Мухтав! Мухтав!
Сан чаплӑ харсӑр халӑхна
Савать Мускав.
Ай-яй-яй-яй—ай,

Ай-яй-яй-яй—ай,
Сан паттăр ывăлусене
Мухтав!

2.

Эпир тараватхăнасем пулар-и,
Тăван халăхпа ĕçер-и, çиер-и?
Сӳнми телее мухтаса юрлар-и,
Кун-çул черккине çӳлерех çĕклер-и?

Тулли черкке, çап-çут черкке,
Янра алра!
Тăвансемпе пĕрлешнĕ чух
Юрлар, савнар.
Ай-яй-яй-яй—ай,
Ай-яй-яй-яй—ай,
Кашнин чĕри хаваслă чух
Юрлар!
Мухтав сана, Тăван Çĕршыв,
Мухтав! Мухтав!
Сан харсăр чаплă халăхна
Савать Мускав.
Ай-яй-яй-яй—ай,
Ай-яй-яй-яй—ай,
Сан паттăр ывăлусене
Мухтав!

ШАНЧĂКЛĂ ХУРАЛ

1.

Çилĕ ахăрать-и,
Тăвăл çывхарать-и,
Аслати кĕрлет-и сĕмсĕр пĕлĕтре—
Пурсăмăр та сыхă,
Пурсăмăр та хатĕр
Харăс çĕкленмешкĕн кашни сехетре.

Эпĕр хатĕр, пурте сыхă,
Шанчăклă хурал.
Лăпкă пурнăçшăн, çĕршывшăн
Çĕкленет вăй-хал!

2.

Пурăнмашкăн ирĕк,
Вăй-хăват та çирĕп,
Тăшман сăхланаймĕ пирĕн пурнăçа.
Шанчăклăн тăратпăр,
Çĕршыва сыхлатпăр,
Тĕлермест самант та пирĕн паттăр Çар.

Эпе́р хатӗр, пурте сыхă,
Шанчăклă хурал.
Лăпкă пурнăçшăн, çӗршывшăн
Çӗкленет вăй-хал!

3.

Юхтăр шухă юрă
Аслă çӗршыв тăрăх;
Хулара, ялта та кашни шахтăра,
Çӗнтерӳ ялавӗ—
Çулпуçăмăр Сталин
Хурçă пек тăрать-çке аслă вахтăра.
Эпӗр хатӗр, пурте сыхă,
Шанчăклă хурал.
Лăпкă пурнăçшăн, çӗршывшăн
Çӗкленет вăй-хал!

ӐМӐРТКАЙӐК

Ой, эс, шухӑ кайӑкӑм,
Паттӑр ӑмӑрткайӑкӗ!
Пит ҫӳлте вӗҫетӗн эс,
Пӗлӗтре ҫиҫетӗн.
Вичкӗн ҫил те ним те мар,
Аслати те ним те мар,
Ярӑнатӑн тӳпере—
Сутҫанталӑкӑн хуҫи!

Аслӑ Кунӑн хӗвелне,
Санпа ӑмӑртса эпир
Хуралларӑмӑр ялан
Чыслӑн та телейлӗн.
Тулчӗ тӑшманӑн шӑпи,
Ҫитрӗ кӗтнӗ пархатар;
Халӗ хамӑр аларах
Ҫутӑ саванӑҫ уҫҫи!

Ой, эс, аслӑ пурнӑҫӑм,
Пархатарлӑ пурӑнӑҫ!

Паттăр халăх чĕрине
Вăй-хăват паратăн.
Сăхă ĕмĕтлĕ тăшман
Çыхланаймĕ нихăçан.
Пирĕн чаплă Çĕршывра
Яванаймĕ тек çăхан.

Кашни канăçлă кĕтес
Çутă чечек çурнăшăн
Тав тăватпăр çулпуçне
Ăшшăн, тараватлăн.
Вутлă тăвăл хускалсан,
Кар çĕкленĕпĕр самант,
Кашни пулăпăр ун чух
Ăмăрткайăкпа пĕр тан.

Ой, эс, чаплă ĕмĕрĕм,
Çилçунатлă ĕмĕрĕм!
Кунçул урлă яранса
Иртсе кайăн эсĕ.
Пурнăç панă хăватпа
Ăмăрткайăк чĕпписем
Вĕçсе тухĕç йăваран,
Тупа тăвĕç хĕвеле.

Ырă, чаплă ятпала
Çĕн ĕмĕре кĕнĕшĕн
Аса илĕç тен пире,

Асапа пӗлмесӗр.
Вара ҫӗнӗ чаппала
Хурал тӑрӗҫӗ вӗсем
Пурнӑҫ пӳрнӗ ырлӑхпа
Сталин панӑ телее!

АТĂЛĔСЕМ АНЛĂ

Атăлĕсем анлă, шывĕ тăрă,
Урхамаха мĕншĕн шăварам мар?
Çĕршывăмăр аслă, пурнăç ирĕк,
Пĕр саванса мĕншĕн юрлам мар?

Ларассăм çук çыран ай хĕрринче
Çултен кимĕ шуса аниччен.
Парассăм çук Тăван çĕршывăма
Нимле хаяр тăшман аллине.

Авăтать-çке куккук, юрлать шăпчăк
Хăмăшпала хăях хушшинче.
Савăнать-çке чунăм, юрлать чĕрем
Ырлăхпала телей хушшинче.

Акăшĕсем шурă, тăрни кăвак,
Мĕншĕн кайăк тесе калас мар?
Хам çуралнă Тăван Çĕршывăма
Мĕншĕн анне тесе калас мар?

Укăлчара текех талпиçен çук,
Пулсассăн та йĕппи чикес çук.

Ман чӗрере текех кусслӗ çук,
Пулсассӑн та хурлӑх витес çук.

Укӑлчанӑн тулне кантӑр акрӑм,
Салакайӑк лармин юрӗччӗ.
Сирӗн умра тӑрса эп юрларӑм,
Сивӗ сӑмах тивмин юрӗччӗ.

Укӑлчанӑн тулне шур юр çумӗ,
Çулсӑр-йӗрсӗр çӳрен пӗри пулмӗ.
Ҫамӑр Сталин атте сывӑ чухне
Ӑраскалсӑр çӳрен пӗри пулмӗ.

ТУСЕМ

Хӗвел ҫинче телей ҫиҫсе выляна чух
Эп Кавказра сире тӗлпулнӑччӗ, тусем!
Кунҫул ҫунаттисем ҫилпе ҫӗкленчӗҫ те
Аджарире сире каллех пуҫ тайрӑм эп, тусем.

Сӗм инҫетех ӑсатнӑччӗ сире хумсем;
Тӗтреллӗ тинӗс ыйхӑран вӑранчӗ те
Хӑватлӑ тӑвӑл ҫеҫ туллашрӗ таврара,—
Пӗр шиксӗрех сире йӗрлерӗм эп вара, тусем.

Хӗвел шевлипеле вылярӗ асамат,
Унтан хура чаршав хупларӗ таврана.
Ҫӗпре ӑшне путса ҫухалчӗ ҫутӑ кун,
Ҫапах чӗрем сире шырарӗ ман, тусем.

Мерчен саспа, ҫут уйӑх сирчӗ тӗтрене.
Сар ҫу тумламӗ пек, саланчӗҫ ҫӑлтӑрсем.
Шӑлан ҫырли йӗппи йӗплерӗ ӳт-тире,—
Эп пур-пӗрех сире шырарӑм-ҫке, тусем.

Пӗлӗтелле кармашакан пиксем ҫине
Чул-ту кӑкри тӑрӑх тапса сикейрӗ рысь.

Шăмшакăм хурçă пек! Çĕклентĕм тӳпенех,—
Кусăмсемпе лăпкарăм эп сире, тусем.

Сăрт аяккисене витет лаштра вăрман,
Çут пĕлĕтрен çӳлте вĕçеççĕ пĕрхĕтсем.
Мухтавлă Атăл саламне кӳрсе парса,
Пуçа кĕрнеклĕн тайрăм эп сире, тусем.

Йăваш çилпе турат чĕтренине курсан,
Ăсхакăла манне хускатрĕç ĕмĕтсем...
Чечек шăршипеле чĕрем хĕрсе çитсен,
Сӳнми мухтавăра çĕклерĕм эп, тусем.

Айва çеçки çине кăвак хуппи ӳксе
Лимон шăршиллĕ сывлăм сапнă чух,
Казбек кукша пуçне чĕркерĕ шур чалма,—
Вара сиртен эп уйралтăм, тусем...

ЙЁНЕРЛЕ УТНА ЭС, КАЧЧӐ!

Йӗнерле утна эс, каччӑ!
Урхамах ҫине утлан.
Паттӑрсем паян тухаҫҫӗ
Ҫӗнтерӳллӗ похода.

Паттӑрсем паян тухаҫҫӗ
Хӗвеле тупа тума,—
Аслӑ Сталиншӑн, Ҫӗршывшӑн
Ҫапӑҫса чапа тухма.

Йӗнерле утна эс, каччӑ!
Урхамах ҫине утлан.
Тусусем сана ӑсатчӑр
Ҫапӑҫмашкӑн улӑпла...

Йӗнерлерӗ ҫамрӑк каччӑ
Йӗс таканлӑ ҫӑрхине.
Шурӑ тутӑр сулкалаҫҫӗ
Тусӗсем халь ун енне:

„Уйрӑлмашкӑн вӑхӑт ҫитрӗ...
Чыслӑн кӗтӗпӗр сана!“

Урхамахӗ тапса сикрӗ,
Ҫил вӗҫтерчӗ тусана...

Пинӗн-пинӗн ыткӑнайрӗҫ
Вут чӗреллӗ йӗкӗтсем.
Шурӑмпуҫӗ шупкалайрӗ,
Кӗренленчӗҫ пӗлӗтсем.

Хурҫӑ шанчӑкӑмӑр хатӗр:
Аслӑ Сталин хушсанах,
Паттӑр ҫарӑмӑр аркатӗ
Пӗтӗм ирсӗр тӑшмана!

ĂСАТУ

Утлăн-утлăн, юланутлăн
Йĕкĕтсем иртеç хирпе;
Каччăсем çиве салхуллăн
Сарă хĕр пăхать ирпе.

Пичĕ нар пекех ун йăмăх,
Чунĕ тунсăх çав тери.
—Эс кама кĕтетĕн, йăмăк,
Камшăн сан чĕрў вĕри?

Сăмах хушрĕ колхоз хĕрĕ
Хурланса та имексе:
—„Манăн пурччĕ кĕмĕл çĕрĕ
Ылттăн енчĕк тĕпĕнче.

Кĕмĕл çĕреччĕ—савниçĕм,
Ылттăн енчĕкчĕ чĕрем...
Çамрăк чунăмçăм телей çеç
Ман кĕтетчĕ ĕмĕре.

Вăхăт çитрĕ—тутăх çирĕ
Кĕмĕл çĕрĕ çуттине:

Чун савнишӗн вӑрҫӑ хирӗ
Хатӗрлет халь парнине...

Сӑхӑ нимӗҫ эсремечӗ
Татрӗ пирӗн ӗмӗте.
Таварӑу вӗри сехечӗ
Халь чӗнет ман йӗкӗте!“

Утлӑн утлӑн, юланутлӑн
Итрӗҫ, кайрӗҫ йӗкӗтсем.
Сар хӗр ҫеҫ тӑрать салхуллӑн
Хӑйӗн савнине кӗтсе.

Ак маттур та ҫилҫунатлӑ
Урхамах-ут сиктерсе,
Пӑхаттир пек вӑй-хӑватлӑ
Каччӑ ҫитрӗ вӗҫтерсе.

Вӗҫсе ҫитрӗ те тӑратрӗ
Шух чӗреллӗ ҫӑрхине.
Унтан ӑшшӑн та юлташлӑн
Пӑхрӗ савнӑ хӗр ҫине.

— „Сывӑ пул, ҫурхи чечекӗм,
Ан кулян та, ан хурлан.
Ман чӗрем, хӗвел пекех хӗм
Сапалать сана курсан.

Сывӑ пул, ҫурхи чӗкеҫӗм,
Сывлӑх сун халь эс мана

Çутă пурнăçшăн, телейшĕн
Тĕп тумашкăн тăшмана.

Выçă кашкăр кĕтÿ евĕр
Тек асаймĕ урнă çар.
Тăшмана памастпăр эпĕр
Хамăр ирĕк пурнăçа.

Вăр-хурах юнпа пĕветĕ
Хăйĕн ирсĕр шăпине.
Вара тин телей хĕвелĕ
Ăшшăн пăхĕ çĕр çине!"

Тутисем сикленчĕç хĕрĕн,
Вăл тăрать, куçне шăлать.
Унтан витĕмлĕн, хĕрÿллĕн
Хăй тусне çапла калать:

—Сывă пул, юлташăм, тусăм...
Мĕн сунам-ши эп сана?
Çĕршыва вершук та, пусăм
Ан таптат эс тăшмана.

Вилĕме курсан—ан тар эс,
Тăшмана курсан—ан чак.
Чаплă пурнăç пархатарĕ
Çĕнтерÿ тусан анчах.

Сан юну—ĕçхалăх юнĕ,
Сан чĕрÿ—мĕльюн чĕре.

Ху вилсен, яту сан юлӗ,
Юлӗ ӗмӗр-ӗмӗрех!“

Сывпуллашрӗҫ икӗ тантӑш
Ӗмӗр-ӗмӗр манмасла.
Хӗр куҫҫуль тӑкмасть пулсан та
Чунӗ темшӗн тунсӑхлать.

Ушкӑн-ушкӑнӑн иртеҫҫӗ
Маттурсем мӑн ҫулпала.
Сарӑ хӗр ҫаплах хирте-ҫке
Шурӑ тутӑр сулкалать...

ШУРӐ КӐВАКАРЧӐН

Шурӑ-шурӑ кӑвакарчӑн,
Ма вӗҫетӗн пӗр пӗччен?
Мӗн шыратӑн ирӗн-каҫӑн
Кӑвак пӗлӗт тӳпинче?

—Ах, вӗҫетӗп эп, йӗретӗп,
Вут ҫунать ман ӑшӑмра:
Хурчӑка тытса пӗтерчӗ
Манӑн савнӑ мӑшӑра!—

Шурӑ-шурӑ шур аппаҫӑм,
Ма салхуллӑн эс ларан?
Куҫӑнтан мерчен куҫҫулӗ
Ирӗн-каҫӑн юхтаран?

—Ах, ларатӑп эп, йӗретӗп,
Вут ҫунать ман ӑшӑмра:
Юнлӑ вӑрҫӑра вӗлерчӗҫ
Манӑн савнӑ мӑшӑра!..

Ҫук, ан йӗр-ха, шур аппаҫӑм,
Ан юхтар ҫут куҫҫульне.

Çилçунат ут йĕнерле те
Тухса вĕç тăшман çине.

Нимĕн шиксĕр, çĕнтерӳллĕн
Çапăç эсĕ тăшманпа.
Пуçне хуна мăшăрушăн
Çакă пулĕ ыр парне!

ХЁÇ

Суранăма сыватрăн эс манне,
Хăватлă çилёрен шăратнă хёç:
Пулмарăм эп усал тăшман айне,—
Мухтав сана! Çап-çут хёлхемён çиç!

Ан тутăх эс, нихçан та ан мăкал.
Сана пăрахмăп паттăр алăмран.
Этем чунне кисретнё тамăка
Аркататăп пётём вăйăм-халăмран.

Хам хуйхăма икке касса çурса
Шавах тăшман çине вёçтертём эп;
Сўнми çут çăлтăра тупа туса
Хама телей патне çитертём эп.

Вăй-халăма çёклерён эс манне,
Вёри юнпа çуса тасатнă хёç.
Çампа пулмастăп эп тăшман айне,
Мухтав сана! Ан тутăх! Ёмёр çиç!

ТĔТĔМ

Шăратнă кĕмĕл пек çут пĕлĕте
Вĕл-вĕл вĕçет кăвак çилхеллĕ тĕтĕм.
Хумхатрĕ вăл ăшри ыр ĕмĕте,
Салтакăн кăмăлне лăпкарĕ питĕ.

Ытла та ырă эс, тăван кĕтес!
Чуна уçать сан çĕн кунун хĕвелĕ.
Тем чухлĕ йывăрлăх тӳссессĕн те
Тăван Çĕршывра çеç эпир телейлĕ.

САПКА ЮРРИ

Сулахайăн-сылтăмăн
Çăлтăр куç хупать...
Çывăр, чĕппĕм-ылттăнăм,
Лăпкă ыйхупа!

Каçĕ килчĕ канăçлăн
Питĕ инçерен.
Ӳс, пепкеçĕм, савнăçлăн,
Çитĕн кунсерен.

Уйăх пăхрĕ вăрттăн çеç
Нӳрĕ çĕр çине.
Çăлтăр ӳкрĕ, вăрхăнчĕ
Кӳлĕ хĕррине.

Вăл çăлтăра илĕп эп,
Илĕп, пӳ çитсен.
Хĕве чиксе килĕп эп
Уйăх сисиччен.

Пĕкечерен çакăпăр
Çавă çăлтăра.

Пепкеме çутаттăр вăл
Йăлтăр-ялтăрах.

Тяппупала тяп! ту эс,—
Савăнтăр аннӳ.
Çăлтăр ӳкĕ, тяк! тăвĕ,
Эс кăна ан ӳк.

Çывăр, чĕппĕм-ылттăнăм,
Канлĕ ыйхупа.
Сулахайăн-сылтăмăн
Çăлтăр куç хупать...

СЫВЛĂМ

Çутă кӳлĕ хĕррине
Тантăш тухрĕ ирхине.
Лăпкăн-лăпкăн çил вĕрет те
Кĕмĕл сывлăм пĕрхĕнет.

Кĕмĕл сывлăм пĕрхĕнет,
Сар хĕр чунĕ хĕпĕртет.
Тусĕнчен çыру вăл илнĕ,—
Манас çук мĕн ĕмĕрте.

Хĕр кĕтет-ĕçке ăна,
Ир те, каç та яланах.
Чĕререн вăй-хал сунать вăл
Çĕнтермешкĕн тăшмана.

Пурнăç тухĕ хуйхăран,
Каччă килĕ вăрçăран;
Килĕ паттăр ятпала,
Çут хĕвел пек чаппала.

Çута кӳлĕ хĕррине
Сар хĕр тухĕ ирхине;
Хăйĕн савнă йĕкĕтне
Кĕтсе илĕ чечекпе.

ХĔВЕЛ ТУХАТЬ

Ахах шевли акса хĕвел тухать,
Йăл-йăл кăна кулса сар хĕр пăхать.
Савнийĕнчен вăл илнĕ ыр хыпар,
Çампа чĕрийĕ ун салхуллă мар.

. . . .

Тек тунсăхламĕ чун. Сăмах тату,—
Ăна кĕтет тивлетлĕ юрату.

ВИЛĔМЕ ÇĔНТЕРНИ

Хăруш аманнă вăл... Сывлать аран...
Куçа уçса хупма та вăйĕ çук ун...
Ытла та юн нумай çухатнăран
Çăлма ним чухлĕ шанчăк çук хирургăн.

Хирургваскать. Халь вилĕме çĕнме
Секунд çине шанни кăна пултарĕ.
Çĕлерĕ сурана. Професçи тӳсĕмпе
Чĕре шакканине итле пуçларĕ.

Сехет шаккать. Боецăн çеç чĕри
Нихçан сыпăнмасла тапать вăрахăн.
Çамки кăна тӳсме те çук вĕри
Ик-виç хутчен аманнă ват салтакăн.

Этем хакне чухлать хирург: „Часрах...
Çĕралла кубик юн... Васкавлăн янтлăр".
Анчах ним те чĕнме пĕлмест сестра,—
Çĕраллă мар, юлман-çке пĕр тумлам та!

Ăнланчĕ çамрăк хĕр. Ăшчик çунать,
Ик куçĕнчен куççуль юхса анас пек.
—Запас юлман, майор... Эп хам юна
Юлташăн пурнăçне çăлма парас теп...

Хаваслăн çĕкленет салтак кăкри,
Палатăна ирхи хĕвел çутатрĕ.
Чĕр сывлăмпа тăван çĕршыв тăпри
Хăват илсе пин-пин чечек çуратрĕ.

КĂНТĂР КĔВВИСЕМ

(Кĕвĕлемен сăвăсем)

Хĕвел ташши

Тата ăçта пур-ши кун пек тивлетлĕ кĕтес? Тата ăçта тупма пулать-ши кун пек çап-çут сенкер тӳпе? Тата ăçта курма пулать-ши кунти пек пин-пин хĕлхемпе çиçсе тăракан хĕвеле?

Çуркунне, çуркунне! Пурнăçпа тараватлăх илсе çитертĕн эс тăшманран тасалнă кашни çурт умнех!

* *
*

Хĕлехленчĕç сĕтлĕ-çулă çутçанталăк кунĕсем. Çурхи хĕвел юхтарчĕ ирĕклĕ çĕр-шывăмăр çине хăйĕн кĕввине. Чĕрĕ хунавсем кăларса, каллех пурнăç çĕкленчĕ çăлăнăçне тупнă ăшă кăнтăрта.

* *
*

Эп кашни ир, кашни каç Мускав сассине итлетĕп. Пин-пин çăлтăрсемпе çутăлса, саламлать тăван столица хăйĕн паттăр ывăлĕсене. Савăнăçпа пархатарлăх кӳрет темиçе пин çухрăм урлах каçхи шăплăха хумхатса килекен сасă манăн чĕреме.

* *
*

Хĕвел ташлать.
Вунă хут ытларах хутшăнчĕ кăвак сухаллă мучин иксĕлме пуçланă вăй-хăвачĕ. Юман кĕреш пек пĕренене пĕччен çĕклесе хучĕ вăл кăмрăкпа кĕл вырăнне çĕнĕрен çĕкленсе ларнă пысăк керменĕн юлашки йӳнĕ çине. Кĕреçесемпе витресем йăтса, хĕвелтен те иртерех тухса кайрĕç хĕрлĕ питлĕ хĕрĕсем колхоз пахчине шăварма, çимĕç йывăççисене йывăр суранран сыватма.

* *
*

Çитмĕл çулхи асаннен пукан пек çеç мăнукки хăйĕнчен пысăк чула йăвантарасшăн тĕрмешет. Пысăк çын вырăннех картать имĕш вăл хăйне,—çаннисене чавса таранах тавăрнă.

Термеклен, термеклен, пӗчӗкҫӗ улӑп чӗппи! Ӳссе ҫитсен, аҫу пекех паттӑр пулӑн, аллунти ҫӑкӑр тӑвара нихӑҫан та ҫиче ютран килнӗ харампыр тӑмшана туртса илме памӑн!

* *
*

Ваштӑр кӑна ваштӑр вӗрсе иртет Тӑван ҫӗршыв тӑрӑх хаваслӑ ҫил ҫурхи хумсем ҫинче, пурҫӑн ҫилхисене вӗҫтерсе.

Уҫҫӑнтарах вӗрсемччӗ, ҫунатлӑ ҫилӗм! Тӑван ҫӗршывӑн кашни кӗтессинех таравватлӑх илсе кил!

Тул ҫутӑлать

Кам-ши, кам-ши тӑкса янӑ кӗмӗл хумлӑ тинӗсе ҫакӑн чухлӗ ҫӑлтӑрсем?

Мӗншӗн шутламаҫҫӗ-ши пуҫтармашкӑн вӗсене пӗве ҫитнӗ сар хӗрсем?

Кашни ҫӑлтӑр чун юратнӑ йӗкӗте парнелеме юрӗччӗ. Унӑн паттӑр кӑкрине илемлетсе тӑрӗччӗ.

* *
*

Ҫук, шутламаҫҫӗ сар хӗрсем тинӗс хумӗсем хушшине тӑкӑнса кайнӑ ҫӑлтӑрсене

суйламашкăн. Вĕсен савнийĕсен кăкрисем çинче ахалех те темĕн чухлĕ парнесем— медальсемпе орденсем.

*   *
*

Уйăх тухрĕ хураллама каçăн шăплăхне. Тӳпери хуркайăк çулĕ тăрăх кусса кайрĕç ылттăн-кĕмĕл çăлтăрсем.

Тĕлĕретчĕ кăнтăр каçĕ, лăпкăн сывласа. Акă халĕ куçне уçрĕ, меллĕн карăнса. Сиреймерĕм те эпĕ шурăмпуçĕ хĕрелме пуçланине.

Тул çуталать иккен.

Телей çывхарса килеть.

Кăнтăр хĕрĕсем

Чечек айлăмĕнче шăнкăр-шăнкăр шыв юхать. Сулхăн шыв, тăрă шыв,—кĕмĕл шăнкрав саслăскер.

Сĕвекрех сăрт хĕррипе чечекленсе сад ӳсет. Улма сачĕ, иçĕм çырли сачĕ,—хаваслă юрă майлăскер.

*   *
*

Ирсерен ик çамрăк хĕр шыв çĕклеççĕ айлăмран картлă кĕвентесемпе. Пиллĕх пане

вӗсене аслӑ Ҫӗршывӑмӑр-анне сыватмашкӑн ҫутҫанталӑк суранне.

Шӑвараҫҫӗ сар хӗрсем кашни ир, кашни каҫ улма йывӑҫҫисемпе иҫӗм ҫырли пахчине. Суранланнӑ ҫеҫкесене чӗрӗ сӗткен кӳртеҫҫӗ кӑнтӑр хӗрӗсем.

* *
*

Часах хунав кӑларӗҫ улма йывӑҫҫисемпе иҫӗм ҫырли тӗмӗсем. Пиҫсе ҫитӗҫ пахчара ҫупкӑм-ҫупкӑм ҫимӗҫсем кӑнтӑр хӗвелӗ ӑшшинче!

Кӗтсе илӗҫ сар хӗрсем инҫетри-инҫетри савнӑ тусӗсене. Кӗтсе илӗҫ парнепе—пиҫсе ҫитнӗ ҫимӗҫпе, хӗрсе ҫитнӗ чӗрепе, кӑмӑл тулли вӗри юратупа.

Мухтав сире, кӑнтӑр хӗрӗсем, Тӑван Ҫӗршыв чечекӗсем!

Аманнӑ салтак

Хура тинӗс хум шавне итлесе, чӑваш салтакӗ выртать лазаретра. Тапхӑр-тапхӑр ҫитсе ҫапӑнаҫҫӗ вӑйлӑ хумсем ҫыран хӗррине, айлӑн ҫийлӗн купаланса выртакан чулсене аркатса тӗпретеҫҫӗ.

Анлӑ Атӑл хумӗсем шавланине итлес килет аманнӑ салтакӑн, тӑван халӑхӑн кӗвви-юррисене итлес килет. Ҫавӑнпа ҫӗрӗпех

куç хупаймасть çамрăк салтак, тĕрлĕ-мĕрлĕ шухăшсемпе пăтранса асапланать.

Ĕнтĕ тул та çутăлать, шурăмпуç те хăпарать. Илĕм-тилĕм килеспе юлашки çăлтăр куçне хупса анаслать. Салтакăн çеç хупăнмасть мăшăр кăвак куçĕ.

Аса илет Атăл каччи хăйĕн инçетри килйышне, асран каймн варлине.

Айва çеçки çине кăвак хуппи лимон шăршиллĕ сывлăм юхтарать.

Пухса илейресчĕ халь çавă сывлăма çамрăк салтакăн тунсăх кăмăлне уçăлтармашкăн. Мерчен ярăмĕ туса халалана пулĕччĕ çамрăк каччă чун пек савнă сар хĕрне!

Акă хĕвел те тухрĕ, йăлкăшса. Тинĕс хĕрринчи керменсем хыççипе ăшă çил чупкалать, тилĕ пек вăрттăн йăпшăнса.

Илсе çитерсемччĕ, ирхи хавасла çил хăвăн çемçе çунаттусем çинче аманнă салтак саламне Атăл хĕрринчи хура куçлă хĕр патне!

Хăна юрри

Мĕн эс мана çаплах мĕскĕн салтак вырăнне шутлатăн? Манăн суранăмсем тахçанах тӳрленсе çитнĕ ĕнтĕ. Сăн-сăпатăм кăна шуралса юлчĕ пуль тӳссе ирттернĕ асапран...

Пăх-халĕ манăн кушăрхаса кайнă питĕмрен, вуласа тух—мĕн çырса хăварнă унта çав иртнĕ хаяр пурăнăç!

* *
*

„Çĕнтерӳ“ колхозĕнче кашни килĕренех ытарайми чаплă пахчасем ӳсеççĕ. Хĕвел çинчи сывлăм тумламĕсем евĕр йăлтăртатса çиçеççĕ иçĕм çырли сапакисем. Çĕрелле тайăлса хĕрелеççĕ улмасем, витĕр кăна курăнса тăракан Крым улмисем.

* *
*

Килсе ларт ман ума кĕмĕл турилккепеле пиçсе çитнĕ иçĕм çырли; купаласа хур хĕвелпе шăранса тăракан улмусене. Кăна ытлашши нумай кирлĕ тесе ан шутла. Эпĕ куçăмпа курсах та тăранăп, ырă çимĕç шăршипе кăна та ӳсĕрĕлсе мухмăрлăп.

* *
*

Пайтах маттур хĕр-пикесем ӳсеççĕ Çĕнĕ Сала колхозĕнче. Кӳршĕ колхоз хĕрĕсем те вĕсенчен кая мар. Чĕнсе килĕпĕр вĕсенчен чи мухтавлăраххисене, ĕçре чапа тухнисене.

Аманнă салтак умне тăрса, вĕсем хăйсен илемлĕ юррисене юрласа кăтартчăр, тунсăхласа çитнĕ чуна уçса яччăр, пирĕн çам-

раклӑх кӑлӑхах иртсе кайманни ҫинчен ӑнлантарса паччӑр.

* *
*

Ҫын савнийӗсене ӑмсанать ку тесе ан шутла. Манӑн хамӑнах аслӑ Атӑл хӗрринче чун пек юратнӑ савнийӗм пур. Йӗпхӗм хура куҫлӑскер, хура пурҫӑн ҫивӗтлӗскер.

* *
*

Сирӗн колхоз хӗрӗсенчен чечекпе шерпет шӑрши кӗрет. Манран—вӗри суранпа тар ҫунӑкӗ шӑрши кӗрет акӑ.

Чипер пикесем пӑрчӑкансем пек йӑпӑртатса ӗҫлесе ҫӳреҫҫӗ-ҫке пахчара, ирӗке тухнӑ ҫӗр ҫинче.

Хӑйсен тусӗсем инҫетри походран чаплӑ ҫӗнтерӳпе таврӑнасса кӗтсе, илемлӗ чечексемпе тутлӑ ҫимӗҫсем ӳстереҫҫӗ сар хӗрсем.

Унтан та ытларах—таса юра тӑва нимӗнле кирӗк тивретсе вараламасӑр упраса усраҫҫӗ вӗсем.

Иҫӗм ҫырли эрехӗ

Хуть ҫиллен, хуть ятла халӗ эс мана,— иҫӗм ҫырли эрехӗ ӗҫсе ӳсӗрӗлтӗм эп паян.

Хухса туртӑннӑ питӗмсем хӗвел пекех хӗрелчӗҫ манӑн, суранланнӑ шӑм-шакӑм ҫулҫӑ пек ҫӑмӑлланчӗ, чӗрем вунҫич ҫулхи евӗр ҫамрӑкланчӗ.

Чӑшкӑрса ҫеҫ вӗресе тӑрать ҫап-ҫут черкке ӑшӗнче симпыл шӑршипе кӑпӑкланакан эрех шерпечӗ.

Тӑван ҫӗршыв хӗрӗсем хӑналаҫҫӗ-ҫке мана, сурансенчен сывалса ҫитнӗ салтака.

Хам сывлӑхӑмшӑн ӗҫме сӗнчӗҫ вӗсем мана малтанхи черккене,—эпӗ ҫӗршыв сывлӑхӗшӗн ӗҫрӗм.

Тӑвансен сывлӑхӗшӗн ӗҫме хушрӗҫ иккӗмӗш черккене,—эпӗ кӑвак шинеллӗ тусӑмсемпе юлташӑмсемшӗн ӳпӗнтертӗм.

Хӑйсен сывлӑхӗшӗн ӗҫме ыйтрӗҫ виҫҫӗмӗш черккене,—эпӗ ҫутӑ Атӑл хӗрринчи мӑшӑр хура куҫлӑ ҫамрӑк пике сывлӑхӗшӗн ӗҫрӗм.

Авӑ ҫавӑнпа ӳсӗрӗлсе кайрӑм эп паян. Хуть ҫиллен, хуть ятла ӗнтӗ халӗ эс мана,— иҫӗм ҫырли эрехӗ шавлать ман пуҫӑмра...

КĔМĔЛ ТОПОЛЬ

Мелитополь пахчинче
Кĕмĕл тополь
Меллĕн ӳснĕ хумханса
Пит те шукăль.

Вăл телейлĕ Çĕршыва
Сума-сунă,
Каçăн-ирĕн сывлăмпа
Питне çунă.

Вĕлтĕр-вĕлтĕр çулçисем
Вĕлтĕртетнĕ,
Лăпкă ирĕн шăплăхне
Чĕнтĕрлетнĕ.

Анчах ахăр самана
Алхасайрĕ.
Тамăк вучĕ таврана
Кусса кайрĕ.

Çичĕ ютăн çыннисем
Çитсе кĕчĕç,

Вараларĕç Çĕршыва,
Вилĕм кӳчĕç.

Йынăшать те ахлатать
Мелитополь.
Юнлă сывлăм юхтарать
Кĕмĕл тополь.

Çук, асаймĕ тек тăшман,
Алхасаймĕ!
Пурнăçпа тек туртăшма
Пултараймĕ!

Кар çĕкленчĕ те Çĕршыв
Хаярланчĕ,
Чиклентерчĕ тăшмана,
Вăрхăнтарчĕ.

Шурăмпуçĕ хĕрелет,
Ӳкрĕ сывлăм.
Саламларĕ Хĕвеле
Ман Çĕршывăм.

Кĕтсе илчĕ Çут Куна
Мелитополь.
Час кăларчĕ чĕр хунав
Кĕмĕл тополь.

ÇĔНТЕРӲ ЮРРИ

Кĕр хĕвелĕ тараватлăн шăранать.
Пит те капăр çутçанталăкăн кулли!
Сасă кайрĕ савăк хумлăн таврана,
Умри праçник—пирĕн чунăмăр тулли.

Асла Сталин, çут хĕвелĕмĕр, çак ир
Саламларĕ ăшă кăмăллăн пире;
Пархатарлăн черкке йăтрăмăр эпир,—
Çĕнĕ ĕмĕр! Саншăн уçăлчĕ чĕре.

Тăвăл иртрĕ. Кĕрлемест тек аслати.
Кĕтнĕ куншăн ярăмланчĕ асамат.
Чечеклентĕр лăпкă пурăнăç калчи,
Ылттăн хумлăн çĕкленейтĕрччĕ самант!

Канăç çитрĕ пĕтĕм çутă тĕнчене,
Ырлăх пултăр сана, ирĕклĕ Этем!
Юмахри пек чапа тухнă çынсене
Мухтаса эп юррăма халь çĕнетем.

Тек ураймĕ самурайĕ тухăçра,
Сăхă нимĕç сăхланаймĕ анăçран.

Шурӑмпуҫ пек янкӑр ҫутӑ пурнӑҫра
Хӑратаймӗ пире вилӗм тупӑкран.

Ирӗк куншӑн хӗлхемленнӗ хӗвеле
Вупӑр ҫимӗ, варалаймӗ нихӑҫан.
Ҫутӑ хӗҫ пек хурҫӑланнӑ телее
Ӑмсанаймӗ выҫӑ ӗмӗтлӗ тӑшман.

Ялтӑрать тӑван ҫӗршывӑмӑр паян.
Ӗмӗт ҫутӑ. Вӑй-хӑватӑмӑр хӗрӳ.
Эпӗр паттӑррӑн янратӑпӑр ялан:
Сывӑ пултӑр пирӗн чаплӑ ҫӗнтерӳ!

Тав тӑватпӑр аслӑ Сталина эпир:
Чыс-салам, тӑван ҫулпуҫӑмӑр, сана!
Эсӗ пирӗн полководец, командир,—
Сывӑ пурӑн ӗмӗр-ӗмӗр, яланах!

* * *

Кӗрсе вырт, савниҫӗм! Ыйхуна ан тат.
Пит ӗшентӗн пулӗ кун каҫипеле.
Тӑперен ав уйӑх пӑхрӗ вӑтанса,
Ҫӑлтӑр чӑхенейрӗ лӑпкӑ ҫилпеле.

Сулхӑнпа ҫӑҫентӗр вырӑсла хапха,
Шуҫӑм укалатӑр унӑн чӗнтӗрне.
Сан ҫине тивлетлӗн хаклӑ ахахпа
Ҫӗмӗрт ҫеҫкисем ҫеҫ тӑкчӑр шерпетне.

Куҫна хуп, савниҫӗм, ырӑ тӗлӗк кур!
Эпӗ хам хураллӑп санӑн ыйхуна.
Чӗремре ман саншӑн пысӑк ӗмӗт пур,
Анчах каламарӑм ун ҫинчен сана.

Кӑвакарчӑн пулӑп эп кӗҫӗрлӗхе.
Вӗҫсе ӑкӗп санӑн чатӑру умне.
Ҫунатӑма хурӑп кӑкӑру ҫине,
Шӑппӑн чӑмӑртанӑп сан чӗрӑ ҫумне.

---

* * *

Мĕншĕн эпĕ çутă уйăх мар-ши?
Çутă уйăх пулнă пулсанах,
Кантăк витĕр яланах
Хурал тăрăттăм сана
Кашни çĕр, кашни каç,
Куç хупмасăр пач!

Мĕншĕн эпĕ сарă шăпчăк мар-ши?
Сарă шăпчăк пулнă пулсанах,
Савăнтарăттăм сана
Ирĕн-каçăн, яланах
Ырă юррăмсемпеле,
Çепĕç сăввăмсемпеле.

Мĕншĕн эпĕ ылттăн ăсти мар-ши?
Ылттăн ăсти пулнă пулсанах,
Парне кӳрĕттĕм сана,
Ылттăн хутпа чĕркесе
Хамăн шухă чĕреме,
Вут пек вĕреме!

Мӗншӗн эпӗ шурă акăш мар-ши?
Шурă акăш пулнă пулсанах,
Илсе кайăттăм сана,
Çунатсем çине лартса,
Инçенех, инçенех,
Мелӗм çитсенех...

ТАРАЙ ТУТРИ

Тарай тутрин хĕрри çыруллӑ, теç,
Пĕр çыруне халех вуласчĕ ман.
Вӑл çырӑва халех вуламасан,
Пурçăн çырун тĕрри хуралмĕ-ши?

Вуник пике пĕрле халь ӑмӑртаç,
Ӑмӑртура мала тухасчĕ ман.
Ӑмӑртура мала тухаймасан,
Колхоз пикин ячĕ хуралмĕ-ши?

Колхоз çаранĕнче ай виç пакус,
Пĕрне хамах çулнӑн ай туйӑнать.
Хам çулнӑ пакусне хам пухмасан
Ĕç кунĕсем сая ай каймĕç-ши?

Çакӑн чухлĕ маттур йĕкĕт çинче
Пĕри стахановец пулса ĕçлет.
Маттур стахановца ай савмасан
Колхоз пикин ячĕ ай каймĕ-ши?

ШУРĂ РОЗА

Эпĕ тухрăм пахчана
Шурă роза пуçтарма.
Уйăх тулнă тахçанах,
Уйăх—ылттăн кустăрма.

Эпĕ пăхрăм тӳпене,
Куртăм тĕпсĕр пĕлĕте.
Шупка уйăх чӳхенсе
Хумхантарчĕ ĕмĕте.

Эпĕ тухрăм урама
Чун савнипе çӳреме.
Савнă тусăм—хура куç
Хыптарать ман чĕреме.

Эпĕ патăм тусăма
Шурă роза пиллесе:
„Савнă тусăм—хура куç,
Кăмăла эс тек ан хуç!“

ШУР АТӐЛТА

Шур Атӑлта акӑш ярӑнать,
Çамрӑк пике евӗр курӑнать.
Ай-хай-ах, савниçӗм, хура куç,
Çавӑ шурӑ акӑш эсӗ мар-ши тетӗп?

Хурӑнлӑхра шӑпчӑк юр-юрлать,
Пике сасси евӗр туйӑнать.
Ай-хай-ах, савниçӗм, хура куç,
Çавӑ сарӑ шӑпчӑк эсӗ мар-ши тетӗп?

Сад пахчинче мӑкӑнь çурӑлать,
Пике тути евӗр туйӑнать.
Ай-хай-ах, савниçӗм, хура куç,
Çавӑ хитре мӑкӑнь эсӗ мар-ши тетӗп?

Чӑн тӳпере çӑлтӑр суталать,
Пике куçӗ евӗр йӑлкӑшать.
Ай-хай-ах, савниçӗм, хура куç,
Çавӑ çутӑ çӑлтӑр эсӗ мар-ши тетӗп?

КАÇХИ ЮРĂ

Эсĕ уйăх пулсан, эпĕ çăлтăр пулам!
Шурăмпуç çуттипе чӳхенсе çуталам.
Инçетри телее йĕрлесе тупнă чух
Сан çине аякран пăхнипех савăнам.

Эсĕ пурнăç пулсан, эпĕ тĕлĕк пулам,
Вăрттăн каç шăплăхне хускатмасăр сывлам.
Эп сана юмахри тĕнчене куçарса,
Юрату шерпетне астивсе пăхтарам!

Эсĕ ĕмĕт пулсан, эпĕ шухăш пулам,
Çиçĕм пекваскаса, сан хыçран хăвалам!
Ватăлми чĕрене канăç çитнĕ чухне
Сан чунна асамла телейпе хумхатам.

Эсĕ тинĕс пулсан, эп ун хумĕ пулам,
Тăвăлпа тулхăрса, хĕвелпе çутăлам!
Палкаса тăракан аслă пурнăç çинчен
Манăçми юрăсем юрласа хăварам.

Эсĕ мăкăнь пулсан, эп пылхурчĕ пулам,
Çеçкӳне çунатпа сĕртĕнсе ачашлам.
Чĕрери тунсăха çилпеле вĕçтерсе
Виличчен юратма вĕрентсе хăварам!

ЮРĂ

Колхоз пахчийĕнче çӳре-çӳре
Çырла сапакисем суйларăм эп;
Çырла сапакисем суйларăм эп,
Çиесшĕн мар, шăршне пĕлесшĕн.

Йăлăм вăрманĕнче çӳре-çӳре
Маттур сар ачапа вылярăм эп;
Маттур сар ачапа вылярăм эп,
Каясшăн мар, ăсне пĕлесшĕн.

Чӳречĕрсем çинче, куссуй çинче,
Шурă пурçăн тутри хут çинче.
Унăн тĕс каяспа каймассине
Хыпашласа пăхсах чухларăм;
Тусăм савассипе савмассине
Măшăр куçпа пăхсах чухларăм.

Шурă сĕтел çитти мĕншĕн хитре?
Арки вĕçне чĕнтĕр тытнăран.
Арки вĕçне чĕнтĕр тытнăран мар,
Шерепине пурçăн сыпнăран.

Шерепине пурçăн сыпнăран мар,
Сĕтел çине сарса хунăран.

Хамăрах та савни мĕншĕн хитре?
Куç айĕпе вăрттăн пăхнăран.
Ķуç айпе вăрттăн пăхнăран мар,
Ĕçре ялан малта пулнăран:
Ĕçре малта пулнăран çеç те мар,—
Кăкри çине орден çакнăран!

ÇУРКУННЕ

Йӗлме крыльцаллӑ çӗнӗ çурт умне
Пӗр мӑшӑр шӑнкӑрчӑ килсе иленчӗ...
Чуна уçсамччӗ эс, хӗвеллӗ çуркунне,
Кӗрен хумсем çинче вӗçсе килсемччӗ!

Вӑштӑр кӑна вӑштӑр вӗрсе иртет,
Хӗл ыйхине сирсе, йӑпанчӑк çилӗ.
Пин-пин хӗвел ташша ӗнтет хирте,
Çӗкленчӗ аслӑ пурӑнӑç пеххилӗ.

Юман юпаллӑ сар калиткаран
Саркаланса утса тухать мучийӗ.
Кӑвак сухалӗ ун—кӑкри таран,
Паян вӑл çакӑ тутӑ çӗр хуçийӗ.

Кӗмӗл чаршав çине çурхи тӑри
Шевле çиппипеле тӗрӗ тӗрлерӗ.
Вӑтанчӑк пикене куç хӗсрӗ тракторист,
Анчах чӗкеç чӗлхи тупма пӗлмерӗ.

Сӑмахсӑрах ӑнланчӗ ҫамрӑк хӗр:
Ҫурхи вӑйпа вӗрет мӗн чунхавалӗ.
Ҫӗклерӗ кӑкрине хӑватлӑ ҫӗр,—
Чӗре ҫинчи суран часах сывалӗ.

Ыр вӑрлӑхран шӑтса тухать калча,
Папка ҫумне папка хушать латваррӑн;
Пӗрчийӗсем тулса ҫитсен анчах
Тӑван уй-хир перекетне юхтарӗ.

Ҫампа иккен хавaслӑ ҫил хумне
Шӑнкӑравларӗ шӑнкӑрчӑ-асамҫӑ.
Чечек ҫурсам, хӗвеллӗ ҫуркунне,
Хӗрпе качча пеххиллӗхне парсамччӗ!

ĔÇKĔ ЮРРИ

Пуçлар халĕ симпыл ай пичкине,
Ĕçер халĕ колхоз ай ĕçкине.
Эс те тăван иккен, эп те тăван,—
Пĕрле ĕçсе-çиме епле аван!

Хур-кайăксем килет картипеле,
Кайри танаштăрччĕ малтипеле.
Куллен ĕçре эпир пĕр пек хастар,
Наянланса ята ярас та мар.

Çилсем вĕрет иккен, çилсем вĕрет,
Вут пек эрех вĕрет çут черккере.
Пирĕннех те ĕмĕр ай иккĕ мар,—
Тавай ĕçер-çиер те савăнар!

Ай-хай хаяр иккен те сăрисем,
Пĕрер курка ĕçсен те пуç кашлать.
Ай-хай маттур иккен те хĕрисем,
Витре тĕпне çапсан та шеп ташлать.
Ай-люр кинар иккен, ай-люр кинар,
Виличченех пĕрле ай пурăнар!

Лапкаях та лапка шур юр ҫăвать;
Юрти ута юртми тăвас тет пуль.
Курка ҫине курка килех тăрать,—
Ик урана утми тăвас тет пуль.

Юртиех те юртми ай ҫӳреме
Пирĕн колхоз лаши начарах мар.
Пулиех те пулми ĕҫсе-ҫиме
Пирĕн колхоз пӳлми халь ҫара мар.
Ай-люр кинам иккен, ай-люр кинам,
Хăш хулăртан тытса халь тайăнам?

Ĕнтĕ хĕвел кулать, хĕвел кулать,
Колхоз ĕҫкипеле сĕтел тулать.
Тавай ĕҫсе-ҫиер, выляр-кулар,
Тăван ҫĕре-шыва сума сăвар.

Таллим кăна таллим ай сар пурҫин,
Куҫ туллиех иккен хитре тĕрри.
Тăван Ҫĕршыв пекки ăҫта пур-ши?—
Хаваслăхпа ҫиҫет кашнин чĕри!

ЮРĂ

Пурçăнах та кĕпе, шапшур кĕпе;
Çанни кĕске тесе калаççĕ пуль.
Каласан та калаç—ӳпкевĕм çук:
Ытах çанни кĕске теес пулсан,
Манăн пурçăн кĕпем татах та пур.

Сĕтелех те тулли çак ĕçкĕре
Юрă ăстин кĕвви килмест, теç пуль.
Каласан та калаç—ӳпкевĕм çук:
Нӳхрепсенчен симпыл тухас пулсан,
Манăн юррăм-кĕввĕм татах та пур.

ТУПМАЛЛИ

стр.

Умсăмах 3
Хĕвел 5
Телей утравĕ 6
Çулпуç 8
Сталин 12
Полководец Сталин 14
Çĕр-паттăр 16
Тăван Çĕршыв 17
Мускав 20
Çĕнтерӳ юрри 24
Кĕтнĕ хăна юрри 26
Шанчăклă хурал 28
Ăмăрткайăк 30
Атăлĕсем анлă 33
Тусем 35
Йĕнерле утна эс, каччă! 37
Ăсату 39
Шурă кăвакарчăн 43
Хĕç 45
Тĕтĕм 46
Сăпка юрри 47
Сывлăм 49
Хĕвел тухать 51
Вилĕме çĕнтерни 52
Хĕвел ташши 54
Тул çутăлать 56

Кăнтăр хĕрĕсем 57
Аманнă салтак 58
Хăна юрри 59
Исĕм çырли эрехĕ 62
Кĕмĕл тополь 63
Çĕнтерӳ юрри 65
Кĕрсе вырт, савниçĕм! 67
Мĕншĕн эпĕ 68
Тарай тутри 70
Шурă роза 71
Шур Атăлта 72
Каçхи юрă 73
Юрă 75
Çуркунне 77
Ĕçкĕ юрри 79
Юрă 81

Редактор **А. Эсхель.**

НТ 00931. Подписано к печати 8.IX.1947 г.
Об'ем 2,75 п/л. Зак. № 155 Тираж 4000 экз

Отпечатано в Цивильской типогр. Управл. полиграф-пром. при Совете Министров Чувашской АССР

Обязательный [illegible]
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
„31“ августа 1948 г.
№ 89

Цена 4 руб.
Хакӗ 4 тенк.

Илья Тукташ

СОЛНЦЕ

Стихи и песни

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ * 1947